27-мĕш çул тухăть. Хаçĕ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
2
ЭРНЕКУН
20(6771) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕТĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ.

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне **РОКОССОВСКИЕ**
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта **БОГОЛЮБОВА**

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, хупăрласа илнĕ тăшман группировки хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса, паян, февралĕн 1-мĕшĕнче, ТОРУНЬ (ТОРН) хулине крепоçне—çулйĕрсен паха узелне тата нимĕçсен ВИСЛА шывĕ çинчи оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пунктне—штурмласа туртса илнĕ.

ТОРУНЬ (ТОРН) хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ПОПОВ генерал-полковникăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, ДРАТВИН генерал-лейтенантăн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантăн, РЯБЫШЕВ генерал-лейтенантăн, ВОЗНЮК полковникăн, ТРУДОЛЮБОВ полковникăн, КАЛАДЗЕ полковникăн, БЕЛЯЕВ полковникăн, МУРАТОВ полковникăн, КАРПЕЛЮК полковникăн, АБДУЛЛАЕВ полковникăн, КИРСАНОВ генерал-майорăн, ТИМОФЕЕВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БЕСКИНАН, ПРИХОДЬКО полковникăн, ШИБАЕВ полковникăн, ОХЛЯКОВСКИЙ полковникăн, КОВАЛЕВИЧ подполковникăн, КРАВЧЕНКО полковникăн, МАЛЬКОВ полковникăн артиллеристсемĕн; танковăй çарсен генерал-майорĕн ПЕТРУШИНАН, ИГНАТОВ подполковникăн, РАЗУВАЛОВ подполковникăн танкистсĕм; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНАН, КАЛУГИН полковникăн, ТЮРИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВИТВИНИНАН, ДОБЫЧИН полковникăн, БАЛАНДИН полковникăн, ОРДАНОВСКИЙ подполковникăн, ПЕТРОВ подполковникăн саперĕсем; ПРОЦЕРОВ подполковникăн, ИЛЬИН подполковникăн связистсĕм чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ТОРУНЬ (ТОРН) хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частсене «ТОРНЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 1-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ТОРУНЬ хулипе крепоçне туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ТОРУНЬ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ. № 268.

Совет Информаци Бюровĕничен

ЯНВАРĔН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем ХЕВЕЛТУХАÇ ПРУССИРЕ çаплах наступлени туса пынă, БИШОФШТАЙН, ВАРТЕНБУРГ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта çапăçса йышăннă, вăл шутра — МЮЛЬЗЕН, ГОЙТЕНЕН, ЗЕЕРАППЕН, МЕТРЕТЕН (КЕНИГСБЕРГ хулинчен 5 километр хĕвеланăçнерехре), ХАЙДЕ ВАЛЬДБУРГ (КЕНИГСБЕРГРАН 8 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре), КОББЕЛЬБУДЕ, ПАКЕРАУ, ДОРФ ЛОППЕНБУРГ, ФАЛЬКЕНАУ, ГРОСС ШВАНСФЕЛЬД, ТРОУТЕНАУ, ЛЕГИНЕН, КАБИНЕН, БРЕДИНКЕН, ГРОСС РАМЗАУ, РОЙШГАГЕН, ТОЛЛАК ятлă пысăк ялсем. Çакăнта пĕр вăхăтрах АЛЛЕНШТАЙН хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем хĕвеланăçнелле ЭЛЬБИНГ хули енне ялле тата тухма хăтланакан тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

ВИСЛА шывĕн анат тăрăхĕнче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса, МАРИЕНВЕРДЕР хулине туртса илнĕ.

ТОРУНЬ (ТОРН) районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕç Померанийĕ çĕрĕнче ЛИНДЕ, КРОЯНКЕ хулисене туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—РУДЕН, КЛЯЙШИН, ЗАКОЛЛЬНОН, ШЕНФЕЛЬД, БОРКЕНДОРФ ятлă пысăк ялсем тата КУЯН, ВИТТЕНБУРГ, ШЕНФЕЛЬД чугун çул станцийĕсем.

ПОЗНАНЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Германи çĕрĕнче БЕТШЕ, ТИРШТИГЕЛЬ, БОМСТ, УНРУШТАДТ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла çапăçса йышăннă, вăл шутра—ШТОЛЬЦЕНБЕРГ, ПРИТТИН, ГРОСС ДАММЕР, ГРОСС ШМЕЛЛЕН, КЛАЙНИТЦ ятлă пысăк ялсем.

ПОЗНАНЬ районĕнче пирĕн çарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман чăçĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

Январĕн 28-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ПОЗНАНЬРЕН хĕвеланăçнерехри аэродромсенче тата авиаци завочĕсенче нимĕçсен 228 самолетне тытса илнĕ.

КАТОВИЦЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — РЕЙГЕРСФЕЛЬД, КИФЕРШТЕДТЕЛЬ, ШТАНДОРФ, ВИЛЬЧА, ЕГЕРСФЕЛЬД, КРИР ятлă пысăк ялсем.

Январĕн 29-мĕшĕнче УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем аэродромсенче нимĕçсен 55 самолетне тытса илнĕ.

Карпат тăвĕсен тăрăхĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, ЗАКОПАНЕ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла çапăçса йышăннă, вăл шутра—ЛИХОВИЦЕ, ЗАВОЯ, ЛИПНИЦА, ВЕЛЬКА, ЯБЛОНКА, ВИТАНОВА, ВЫХОДНА ятлă пысăк ялсем.

ЛУЧЕНЕЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăç çинерехре пирĕн çарсем, сăртла-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешсе, халăх пурăнакан 100 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—ГЕЛЬПА, МУРАНЬ, ТИССОВЕЦ, ПОЛГОРА, ДОБРОЧ, ДЕТВЯНСКА ГУТА, ДИВИН ятлă пысăк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДАРА) хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, МАРГИТСИГЕТ утравне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, 130 квартал туртса илнĕ.

Январĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 74 танкине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 24 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем январĕн 31-мĕшĕнче ХАЙЛЬСБЕРГ тата ФРИДЛАНД хулисене—нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссин вăтаçĕрти районĕсене хӳтĕлекен вăйлă тĕреклетнĕ пунктĕсене тата çулсен паха узелĕсене—штурмласа тытса илнĕ. Çавăн пекех пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра—КВАНДИТТЕН, МЕДЕНАУ, ГРОСС ХАЙДЕКРУГ (КЕНИГСБЕРГ хулинчен 14 километр хĕвеланăçнерехре), ШТОКХАЙМ, МИЛЬТЕН, КРЕКОЛЛЕН, КНИПШТАЙН ятлă пысăк ялсем.

Январĕн 30-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Хĕвелтухăç Пруссире нимĕçсен 53 самолетне тытса илнĕ, 3.300 нимĕç салтакĕне офицерне ытла тыткăна илнĕ.

АЛЛЕНШТАЙН хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра—ПРОССИТТЕН, ГРОСС ЛЕНКЕНДОРФ, ОБЕР-КАПКАЙМ, МЮНСТЕРБЕРГ ятлă пысăк ялсем. Çакăнпа пĕрлех АЛЛЕНШТАЙН хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн пехотипе танкĕсем тунă атакăсене сире-сире пăрахнă.

ТОРУНЬ (ТОРН) районĕнче тăшманăн хупăрласа илнĕ чăçĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре пирĕн çарсем, çапăçса пырса, нимĕç Померанийĕнче ФЛАТОВ, ЯСТРОВ хулисене, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта тытса илнĕ, вăл шутра—РАДАВНИТЦ, ТАРНОВКЕ, ХАММЕР ятлă пысăк ялсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ПОЗНАНЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ăнăçлăн наступлени туса пырса, Германи чикки урлă каçса кайнă. Бранденбург провинцине пырса кĕрсе, январĕн 31-мĕшĕнче ЛАНДСБЕРГ, МЕЗЕРИТЦ, ШВИБУС, ЦЮЛЛИХАУ хулисене—нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктĕсене тата çулсен пысăк узелĕсене, ОДЕР шывĕ çинчи ФРАНКФУРТ хули патне пымалли вырăнсене хӳтĕлесе тăраканскерсене—тытса илнĕ. Çавăн пекех пирĕн çарсем халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — КЛАДОВ, БАЙЕРСДОРФ, МОРРЕН, ПОППЕ, ПАРАДИС, КУТШЛАУ, СКАМПЕ, ГРОСС, БЛЮМБЕРГ ятлă пысăк ялсем.

ПОЗНАНЬ районĕнче хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

КАТОВИЦЕ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем халăх пурăнакан 40 пункта çапăçса тытса илнĕ, вăл шутра—ХЕЙДЕБРЕКК, ОДЕРВАЛЬДЕ, РАТИБОРХАММЕР, ГОЛЛЕОВ, ВЕЛЕПОЛЕ ятлă ялсем.

ЛУЧЕНЕЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, сăртла-вăрманлă вырăнăн йывăр условийĕсенче наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ПОЛОМКА, БРЕЗНО, ГРОНЕЦ, КОРИТАРКИ, МИТНА, АБЕЛОВА, ТУРЬЕ ПОЛЕ, ЛЕШТЬ ятлă пысăк ялсем.

БУДАПЕШТРА хулан хĕвеланăç пайĕнчи (БУДАРИ) тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Январĕн 30-мĕшĕнче БУДАПЕШТ хулин хĕвеланăç пайĕнче пирĕн çарсем тăшманăн 3.200 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Январĕн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 132 танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 40 самолетне персе ӳкернĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нумай ачăллă амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденсемпе тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальсемпе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 19-мĕш номерĕнче)

Çичĕ ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛĂ III-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

36. Елена Яковлевна Яковлевăна—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ультикасси ял Советĕнчи «Восток» колхоз колхозницине.

37. Екатерина Васильевна Яковлевăна — Сĕнтĕрвăрри хулинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

38. Татьяна Андреевна Юрусовăна—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакасси ял Советĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

Ултă ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА I-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Акулина Яковлевна Ананьевăна — Вăрнар районĕнчи Çĕрпел ял Советĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

2. Агапия Ивановна Арбузовăна—Вăрнар районĕнчи Хапăс ял Советĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

3. Дария Артемьевна Артемьевăна—Вăрнар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

4. Анна Степановна Брейкинăна—Улатăр хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

5. Ирина Ефимовна Дмитриевăна—Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарĕмне.

6. Анна Николаевна Ефремовăна—Вăрнар районĕнчи Упнер ял Советĕнчи «Пионер» колхоз колхозницине.

7. Ксения Ивановна Ивановăна—Вăрнар районĕнчи Арапуç ял Советĕнчи «Арабось» колхоз колхозницине.

8. Варвара Ивановна Ильинăна—Етĕрне хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

9. Матрена Алексеевна Калашниковăна—Первомайски районри Нăрваш Шăхаль ял Советĕнчи «Восход» колхоз колхозницине.

10. Дария Евграфовна Кирилловăна — Вăрнар районĕнчи Мăн Турхан ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

11. Мария Андреевна Мельдеševăна — Вăрнар районĕнчи Санарпуç ял Советĕнчи «Красный Санар» колхоз колхозницине.

12. Ирина Мироновна Мироновăна—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

13. Анна Михайловна Михайловăна — Вăрнар районĕнчи Кив Вăрмар ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

14. Варвара Егоровна Николаевăна — Йĕпреç районĕнчи Апаккасси ял Советĕнчи «Путиловка» колхоз колхозницине.

15. Вера Андреевна Одинцовăна—Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимеш ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

16. Акулина Клементьевна Павловăна—Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.

17. Анна Павловна Пелевинăна—Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.

18. Иустиния Андреевна Портновăна — Вăрнар районĕнчи Есĕпепе ял Советĕнчи «Смычка» колхоз колхозницине.

19. Анастасия Порфирьевна Порфирьевăна—Вăрнар районĕнчи Есĕпепе ял Советĕнчи «Смычка» колхоз колхозницине.

20. Александра Семеновна Семеновăна—Вăрнар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

21. Елизавета Семеновна Семеновăна — Вăрнар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «13 лет Октября» колхоз колхозницине.

22. Евдокия Тимофеевна Тимофеевăна — Вăрнар районĕнчи Санарпуç ял Советĕнчи «Красный Санар» колхоз колхозницине.

23. Мария Трофимовна Трофимовăна — Вăрнар районĕнчи Кĕтеснер ял Советĕнчи «15-ый Съезд ВКП(б)» колхоз колхозницине.

24. Ольга Николаевна Федоровăна—Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршă ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

25. Прасковья Степановна Шихеевăна—Вăрнар районĕнчи Мăн Турхан ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

Пилĕк ача çуратса пăхса ӳстернĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА II-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Анастасия Васильевна Абрамовăна — Вăрнар районĕнчи Есĕпепе ял Советĕнчи «13 лет Октября» колхоз колхозницине.

2. Ульяна Леонтьевна Александровăна—Вăрнар районĕнчи Упнер ял Советĕнчи «Апнеры» колхоз колхозницине.

3. Ксения Андреевна Антоновăна—Первомайски районри Первомайски ял Советĕнчи «Искра» колхоз колхозницине.

4. Анастасия Васильевна Борисовăна — Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.

5. Зинаида Васильевна Васильевăна — Вăрнар районĕнчи Кĕтеснер ял Советĕнчи «15-ый Съезд ВКП(б)» колхоз колхозницине.

6. Анна Самуиловна Виткинăна—Етĕрнери ĕç колонийĕнчи служащие.

7. Ольга Васильевна Глумовăна—Етĕрне хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

8. Екатерина Евграфовна Евграфовăна—Вăрнар районĕнчи Мăн Турхан ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

9. Анастасия Ефимовна Ефимовăна — Вăрнар районĕнчи Мăн Турхан ял Советĕнчи «Заря» колхоз колхозницине.

10. Елена Егоровна Ивановăна—Вăрнар районĕнчи Санарпуç ял Советĕнчи «Красный Санар» колхоз колхозницине.

11. Клавдия Ивановна Ивановăна—Вăрмар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

12. Прасковья Федоровна Ивановăна — Вăрнар районĕнчи Кив Вăрмар ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

13. Агафия Илларионовна Илларионовăна—Вăрмар районĕнчи Мăн Çырма ял Советĕнчи «Новая жизнь» колхоз колхозницине.

14. Анастасия Клементьевна Клементьевăна—Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмар ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

15. Ольга Константиновна Константиновăна—Вăрмар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

16. Матрена Васильевна Коротковăна — Вăрмар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

17. Христина Семеновна Кудрявцевăна—Вăрнар районĕнчи Упнер ял Советĕнчи «Апнеры» колхоз колхозницине.

18. Серафима Михайловна Кукушкинăна—Вăрнар районĕнчи Санарпуç ял Советĕнчи «Красный Санар» колхоз колхозницине.

19. Лукерья Леонтьевна Леонтьевăна — Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмар ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

20. Анастасия Прокофьевна Максимовăна—Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмар ял Советĕнчи «Большевик» колхоз колхозницине.

21. Агафия Дмитриевна Михайловăна — Первомайски районри Нăрваш Шăхаль ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

22. Евдокия Назаровна Назаровăна — Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ял Советĕнчи «15-й Съезд ВКП(б)» колхоз колхозницине.

23. Наталия Никифоровна Никитинăна—Йĕпреç районĕнчи Йĕпреç ял Советĕнчи «Красный Октябрь» колхоз колхозницине.

24. Анна Константиновна Никифоровăна—Йĕпреç поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.

25. Прасковья Павловна Петровăна — Вăрмар районĕнчи Есĕпепе ял Советĕнчи «13 лет Октября» колхоз колхозницине.

26. Татьяна Павловна Петуховăна — Вăрнар районĕнчи Мăн Турхан ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

27. Варвара Николаевна Потаповăна — Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

28. Татьяна Михайловна Саврукова — Йĕпреç райпотребсоюзĕн служащине.

29. Мария Ивановна Селивановăна — Первомайски районри Нăрваш Шăхаль ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

30. Анастасия Спиридоновна Сибирякovăна—Первомайски районри Пашьел колхозĕн колхозницине.

31. Вера Степановна Степановăна—Вăрмар районĕнчи Мăн Çырма ял Советĕнчи «Чăваш хресченĕ» колхоз колхозницине.

32. Прасковья Степановна Степановăна—Вăрмар районĕнчи Çĕн Кавал ял Советĕнчи «Победа» колхоз колхозницине.

33. Мария Васильевна Усовăна—Улатăр хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

34. Анна Харитоновна Харитоновăна — Вăрмар районĕнчи Кĕтеснер ял Советĕнчи «15-й Съезд ВКП(б)» колхоз колхозницине.

35. Ефимия Степановна Хламинăна — Вăрнар поселокĕнчи килхуçи хĕрарăмне.

36. Евдокия Ильинична Черновăна—Первомайски районри Нăрваш Шăхаль ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

37. Мария Ивановна Эризановăна—Первомайски районри Нăрваш Шăхаль ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

1945 çулхи январĕн 29-мĕшĕ. Шупашкар хули.

Унăн Превосходительствине Михаил Иванович Калинина Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Президентне

МУСКАВ.

Хăйĕн ĕçлĕ грамотине пама Коста-Рикăна килнĕ чухне Унăн Превосходительстви Константин Уманский господин тата унăн арăмĕ вилнĕ пирки çав тери хурланатăп.

Коста-Рика халăхĕпе унăн Правительстви ячĕпе тата хамăн ятпа Сирĕн Превосходительствăна тата Сирĕн паттăр çĕршывăн Правительствипе халăхне çав чинлĕк пирки хамăр çав тери хурланни çинчен пĕлтеретĕп.

Коста-Рика президенчĕ ТЕОДОРО ПИКАДО.

Сан-Хосе, 1945 çулхи январĕн 25-мĕшĕ.

Унăн Превосходительствине Михаил Иванович Калинина СССР Президиумĕн Председательне

МУСКАВ.

Катастрофа килсе тухнине пула, Унăн Превосходительстви Константин А. Уманский господин, Уманская госпожа тата Коста-Рикăна посолпа пĕрле кайнă пит лайăх совет работникĕсем вилни мана çав тери хуйхăртарĕ.

Совет Союзĕпе Мексика çав тери пысăк ухату тунипе хам черерен кулянни çинчен пĕлтеретĕп.

Уманский господина аслă представительство шанса панипе тата вăл хăй çав тери лайăх çын пулнипе эпир ĕна яланах пĕтĕм черерен хисеплеме.

Мексикăри чи лайăх çар летчикĕпе пĕрле вилни пирĕн икĕ çĕршыв хушшинчи туслăха палăртса пани пулать. Çак инкек ĕнтĕ пирĕн çĕршывсене тата ытларах çыхăнтарать.

Çав тери чаплă посол Уманский хăйĕн пурнăçне çутă кунсене сывхартас ĕçе пане çав кунсем килсе çитессине шанса тăратпăр.

Сирĕн Превосходительствăна хамăн енчен çав тери асла хурса хисепленине йышăнма ыйтатăп.

МАНУЭЛЬ АВИЛА КАМАЧО.
Мексикăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президенчĕ.

Мексико. 1945 çулхи январĕн 25-мĕшĕ.

БОБРУЙСКРИ ЭЛЕКТРОСТАНЦИ ТОК ПАНА

Бобруйск хулинче юсаса çитернĕ электростанци предприятисене, учрежденисене тата пурăнмалли çуртсене ток пани Электростанцире ĕçлекен рабочисем хăйсен пăйĕпех электросетьпе оборудование ĕçлеме кĕртнĕ тата чылай топливо хăтĕрлечĕ. (ТАСС).

Тракторсене февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтересшĕн ăмăртса ĕçлеççĕ

ЕЛЧЕК. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем ĕçченисене тылра сĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантараççĕ. Çак кунсенче МТС работникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура парторгнизаци секретарĕ Иголкин юлташ фронтри историллĕ çĕнтерӳсем çинчен каласа панă.

— Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем,—терĕ Иголкин юлташ,—пире татах та лайăхрах ĕçлеме хушаççĕ. Халĕ пирĕн МТС-ри 17 трактор бригадинчен 8-шĕ хăйсен тракторĕсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ, вĕсем ытти бригадăсене пулăшаççĕ.

МТС-ра уйрăмăнах Сопрыдонов юлташăн бригади малта пырать. Вăл хăйĕн бригадинчи тракторсене, вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Çавăн пекех Астафьев, Долгов юлташсем ертсе пыракан бригадăсенчи трактористсем те ытти бригадăсене пулăшаççĕ.

Фронтран килекен хыпăрсемпе савăнса, кашни трактористпа трактористка социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Вĕсем тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене февралĕн 15-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтересшĕн кĕрешеççĕ.

Ĕç кунĕпех хĕрӳллĕ пырать. Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалĕн Сталин юлташăн приказĕсене МТС коллективĕ хавхаланса итлет. Трактористсем кăнтăрла та, çĕрле те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Çуракине хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз 1944-мĕш çулхи ялхуçалăх çулпе ăнăçлăн пĕтленĕ. Хальхи вăхăтра çитес çуракине хатĕрленес ĕç пырать.

Вăрлăх фондне çителĕклĕ хывса хăварнă. Вăрлăхсене хăвăртрах сортласа пĕтересшĕн, уйрăм звено туна. Çав звенори М. Сормовăпа И. Гусева колхозницăсем питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăшпĕр культурăсен вăхалăхне тĕрĕслеме районри лабораторине янă. Паянхи куна колхоз хире 4500 лав тислĕк кăларнă. Колхозăн планпа 50 плуг 40 гектар сӳре тата 8 сеялка юсамалла пулсан, халĕ плугсемпе сӳресене юсаса.

Кашни бригадăна агротехникăллă мероприятисен планне туса пынă. Çавăн пекех конюхсемпе ферма заведующийĕсене ун тислĕк кăлармалли уйрăм плансем панă. Кашни бригадăрах агротехникăна вĕренмелли кружоксем ĕçлеме тытăнаççĕ.

Колхоз иртнĕ çулхинчен те вăйлăрах тырпул туса илме çине тăрсах хатĕрленет.

А. БУЗАГИН.

* * *

ШАХАÇАН. (Телефонпа). Ильич ячĕпе тăракан колхоз выранти удобренисем хатĕрлемелли уйăхлăхра 1127 лав тислĕк хире кăларнă. 36 центнер фекали, 29 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 37 центнер кĕл пухнă.

Кунта вăйлă тырпулшăн чăннипех çине тăрса кĕрешеççĕ. Кĕрхи тырăсемпе кленер акнă лаптăка, 405 гектар çине юр тытнă. Плугсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ӳре малтанлăха чылай чăрмавсем тĕл пулчĕç. Уйрăмăнах кăмăк çукки ĕçе чăрмантарса тăчĕ. Вăтă, пысăк опытлă тимĕрçе Никифоров юлташ ку чăрмава пĕтерме пулăшрĕ. Колхозрах кăмăк тума тытăнчĕ. Çапла вара тимĕрçе кĕске вăхăтрах плугсемпе сеялкăсене юсаса пĕтерчĕ. Халĕ ытти машинăсемпе урапасене юсаççĕ. Вĕрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене пĕтĕмпех сортласа кунă.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра та уйăхлăх ăнăçлăн иртсе пычĕ. Кунта пуçĕ 2120 лав тислĕк кăларнă. 36 центнер кĕл. 46 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе уйрăмăнах Николаева юлташ ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет. Çак бригада 816 лав тислĕк хире кăларнă. 17 центнер кĕл. 13 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чăваш республикинчи промышленноçăн 1944 çулхи ĕçĕсен хăшпĕр итогĕсем

Орденлă Чăваш республикин предприятийĕсенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем иртнĕ 1944 çулта ĕç фронтĕнчи чаплă çĕнтерӳсемпе паллă турĕç. Чăваш республикинчи государство промышленноçĕ, промышленность халăх комиссариачĕсемпе Çыхăну халăх комиссариачĕн предприятийĕсем çулталăкра продукци туса кăлармалли плана ăнăçлăн тултарчĕç. Тӳрремĕнех Союза пăхăнса тăракан промышленность уйрăмах пысăк çитĕнӳсем турĕ. Вăл промышленность çулталăкри плана 102,4 процент тултарчĕ, продукци туса кăларассине, 1943 çулхипе танлаштарсан, 17,6 процент ӳстерчĕ. Районсене пăхăнса тăракан промышленность çулталăкра продукци туса кăлармалли плана 103,1 процент тултарчĕ. Государство промышленноçĕ пĕтĕмпе илсен, иртнĕ çулхинчен 12,5 процент нумайрах продукци туса кăларчĕ.

Вăрçăн йывăр условийĕсенче те пирĕн республикăн промышленноçĕ çулран çул ӳссе тĕрекленсе пырать. Революциччен чăваш çĕршывĕнче промышленноçăн пысăк предприятийĕсем пачах та пулман, пур пеккисем те тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче питĕ япăх ĕçленĕ, вăрçăн юлашки çулĕсенче вĕсенчен чылайĕшĕсем чарăнса лараççĕ. 1923 — 24 çулсенче чăваш çĕршывĕнчи ценз промышленноçĕ 1913 çулхинчен 17 хута яхăн сахалтарах продукци туса кăларнă. Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă çулĕсенче аркатнă предприятисене юсаса йĕркене кĕртме темиçе çул кирлĕ пулнă. Ценз промышленноçĕн ĕçлекен предприятийĕсем 1923—24 çулсенче 19 пулнă пулсан, 1924—25 çулсенче вĕсен хисепĕ çирĕм пĕррене, 1927—28 çулсенче вăтăр иккĕне, 1928—29 çулсенче вара вăтăр тăваттăна çитнĕ. Ценз промышленноçĕ 1913 çулта туса кăларнă мĕнпур продукци (1926—27 çулсенчи улшăнăмсăр хакпа шутласан) 18,1 миллион тенкĕлĕх пулнă. 1928—29 çулсенче çав промышленность туса кăларнă продукци 12,28 миллион тенкĕ шутланать.

Отечественнăй вăрçăра халăх хуçалăхĕпе пирĕн обществăллă строй питех те йывăр тĕрĕслӳ витĕр тухрĕç. Пирĕн халăх хуçалăхĕ çав тĕрĕслева ăнăçлăн тӳссе иртерни совет стройĕ çирĕппи çинчен калать. Совет стройĕ никам çĕнтерейми вăй пулса тăрать.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пирĕн Чăваш республикин промышленноçĕ те малалла аталанса тата лайăхланса пычĕ. Пирĕн промышленность хăвăрт ӳссе пынине çак цифрăсенчен те курма пулать: промышленность наркомачĕсемпе Çыхăну халăх комиссариачĕн предприятийĕсем 1944 çулта туса кăларнă мĕнпур продукцин хисепĕ, 1940 çулхипе танлаштарсан, 3 хут ытларах. Çак вăхăтра продукци туса кăларассине Канашри вагонсем юсакан завод 5 хут, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь 3 хут ӳстернĕ. 1944 çулта пирĕн заводсенчен пĕрремĕш кăна 1940 çулта республикăн государство промышленноçĕ туса кăларнă цĕтĕм продукцин 75 процентĕ чухлĕ продукци панă.

Пирĕн республикăри государство промышленноçĕн пысăкрах предприятийĕсем тата тӳрремĕнех фронтăн ĕçлекен предприятисем 1944 çулта продукци туса кăлармалли плана ăнăçлăн тултарни тата ирттерсе тултарни савĕнмалла факт пулса тăрать. Котов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсем уйрăмах пысăк. Çаван пекех Слуцкий, Якунин юлташсем главнăй инженерсенчи пулса ĕçлекен заводсем, Етĕрнери спирт завочĕ, Шупашкарти чĕлха фабрики, Пăрачкаври вăрман хатĕрлекен тата пулă тытакан промысла хуçалăхĕ, Долгополянăри йывăç каскалакан завод, Атăл леш енчи торф предприятийĕ тата ытти предприятисем те çулталăкри плана ирттерсе тултарчĕç тата 1943 çулхинчен нумайрах продукци туса кăларчĕç.

Çак предприятисен коллективĕсем хăйсен ĕçри çитĕнĕвĕсене вăрçăн йывăр условийĕсенче турĕç. Малта пыракан предприятисен руководителĕсем ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене большевикла çĕнтерсе пычĕç тата продукци туса кăларассине уйăхран уйăха ӳстерсе пычĕç. Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан завод, ĕç вăйĕ планпа пăхнинчен сахалтарах пулин те, мĕнпур продукци туса кăлармалли программăн ирттерсе тултарчĕ. Котов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра 1944 çулта, ун умĕнхи çулпа танлаштарсан ĕç вăйĕ 23,5 процент çеç нумайрах пулнă пулин те, завод 1943 çулхинчен 155,6 процент ытларах продукци туса кăларнă. Рабочисен ĕçри паттăрлăхĕ, вĕсем тăван çĕршыва юратни, инженерсемпе техниксен тата стахановĕсен творчестви темле йывăрлăхсене те çĕнтерчĕ.

1944 çулта çĕнĕ изделисем туса кăлармаллине, çĕнĕ вăйсемпе агрегатсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Иртнĕ çулта çĕнĕ цемент завочĕ туса лартнă тата унăн оборудованийĕсене вырнаçтарса тухнă. Халăх нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче промышленноçа ура çине тăратнă вăхăтра, халăх хуçалăхĕнче цемент мĕн пек пысăк вырăн йышăнса тăни кашнинех паллă. Çак çултан малалла пирĕн çĕнĕ стройкăсем, чугун çул организацийĕсем тата ытти потребительсем Чăваш республикинче туса кăларнă цементах илме пуçлаçĕ. Пирĕн патра цемент завочĕ лартас ыйтăва 10—12 çул каялла хускатнăччĕ, анчах ун валли чĕртавар вырăнтах тупма пулмасть тесе ыйтăва татса паманччĕ. Çавăнпа хамăр патрах цемент предприятине ĕçе яни пирĕншĕн савăнмалла факт пулса тăрать.

Çапах та иртнĕ çулта пирĕн республикăри промышленность ĕçĕнче çитменлĕхсем те пулчĕç, промышленноçăн хăшпĕр отраслĕсем çулталăкри плана тултармарĕç. Уйрăмах республикăпа облаçе пăхăнса тăракан предприятисем çитĕлексĕр ĕçлерĕç. Вĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, çулталăкри плана тултараймарĕç тата çĕршыва 1943 çулхинчен 7,5 миллион тенкĕлĕх сахалтарах продукци панă. Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем çулталăкри плана уйрăмах сахал тултарчĕç. «Чăвашдрев» трестĕ çулталăкри плана 66,1 процент çеç е 1943 çулхинчен 38,5 процент сахалтарах тултарчĕ. Çак треста кĕрекен 6 предприятирен пĕр Долгополянăри завод çеç плана тултарнă. Чăваш АССР вăрманпромхозĕсем механизацилеменĕ вăрман пункчĕсем вăрман хатĕрлемелли çулталăкри плана, пĕтĕмĕшпе илсен, 59,6 процент çеç, е 1943 çулхинчен 15,6 процент сахалтарах пурнăçланă. Çĕршыва вутăпа ытти вăрман материалĕсем нумай кирлине шута илсе, партипе правительство вăрман организацийĕсене пысăк пулăшу парса тăраççĕ. Анчах та республикăри чылай вăрман организацийĕсен руководителĕсем хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетмен; ĕçе организацилес, вăрманта ĕçлеме мобилизацилеменĕ рабочисемпе усă курас енĕпе начар ĕçлеççĕ, ялан ĕçлекен рабочисен кадрине çитĕлексĕр хатĕрлеççĕ. Вăрман организацийĕсенче механизмсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ: час-часах автомашинăсем—чуркăсемсĕр, паровозсем—вутăсăр лараççĕ, рабочисен ĕç тухăлăхĕ начар. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Республика 25 çул тултарнине вăрман организацисем плана тултарнипе тата ирттерсе тултарнипе кĕтсе илессе чăваш халăхĕ шанса тăрать.

Пирĕн республикăри халăх хуçалăхĕн юлса пыракан тепĕр участокĕ вăл—промысла кооперацийĕн промышленноçĕ. Çак промышленность иртнĕ çулхи плана чылай тултараймарĕ тата 1943 çулхинчен сахалтарах продукци панă. Пĕтĕм промысла кооперацийĕ плана мĕн чухлĕ тултарни пирки татăклă калама халĕ те хĕн-ха. Мĕншĕн тесен артельсенче, çаван пекех союзсенче те, шут ĕçне юхăнтарса янă, чылай артельсен тата союзсен руководителĕсем туса кăларнă хăшпĕр продукцин хакне 1932 çулхи улшăнман хакпа хаклас вырăнне халхи вăхăтра сутăнакан хакпа хаклаççĕ. Плана тултарнă пек кăтартас тесе çакăн пек туни—государствĕшăн сиенлĕ ĕç туни пулать. Промкооперати системинче продукцисене улшăнми хакпа шута илес ĕçе пăсни çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕн ларăвĕнче сӳтсе-явнă. Совнарком промкооперации çаван пек сиенлĕ практикăна хыттăн сивлерĕ, промкооперати Управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне Степанов юлташа тата союзсен председателĕсене йăнăша халех тӳрлетме, туса кăларнă мĕнпур продукцисене тепĕр кут шута илсе тухма хушрĕ.

Иртнĕ çулта çаван пекех пир-авăр промышленноçĕ те çителĕксĕр ĕçлерĕ. Шупашкартипе Канашри пир-авăр фабрикисем продукци туса кăларассине, 1943 çулхипе танлаштарсан, 2—3 хут ӳстерчĕç пулин те, çулталăкри плана чылай тултараймарĕç. Çĕрпӳрипе Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикисем, Элĕкри сӳс-кантăр завочĕ, Пăрачкаври йĕтĕн завочĕ иртнĕ çулта янăх ĕçлерĕç. Пир-авăр промышленность предприятийĕсем начар ĕçлени рабочисен ĕç тухăçлăхĕ начарринчен, оборудованисене туллин ĕçлеттерменнинчен тата вĕсем ахалъ тăнинчен нумай килет. Пир-авăр фабрикисенче çамрăк рабочисене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Пир-авăр промышленность предприятийĕсен руководителĕсен «Правда» хаçат çапла çырчĕ: «Ывăлăхсем умĕнче алла усса лармалла мар, ĕçе çĕнтерсе пымалла, вырăнти мĕнпур ресурссене хута ямалла—çакăн пек ĕнтĕ промышленноçăн малта пыракан отраслĕсенче вăрçă вăхăтĕнче çирĕпленнĕ традици. Пир-авăрпа çăмăл промышленноçсен предприятийĕсенче те çак традицие пăхăнса пымалла».

Промышленноçăн уйрăм отраслĕсемпе предприятийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — плана тикĕс пурнăçласа пыманни, планпа палăртнă изделисене пурне те туса кăларассишĕн çителĕксĕр кĕрешни пулса тăрать. Производство йĕркеллĕ ĕçлеменни Улатăрти паровозсем юсакан заводра лайăх курăнать: кунта 1944 çулхи январь уйăхĕнче мĕнпур продукци туса кăлараçи, 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, пĕрре çурă хут тăхнă; 1944 çулхи декабрьте январьтинчен 10 процент ӳснĕ. Промкооперати, вырăнти тата апат-çимĕç промышленноçĕсен системинче çулталăкри плана тултарман предприятисем чылай. Сăмахран, Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн системинче районсенчи 10 апат-çимĕç комбиначĕ, çăнăх авăрлакан армансен трестĕ, Шупашкарти премĕк фабрики, Етĕрнери çу завочĕ плана тултарман. Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕ тăрăх 38 предприятирен вунултăшĕ плана тултарман.

План, çаван пекех, ассортиментсем тăрăх та начар пурнăçа кĕрсе пырать. Промышленность Халăх Комиссариачĕсемпе промкооперати союзĕсем плана ассортимент тăрăх тултарман предприятисен руководителĕсенчен плана тултарма çирĕппĕн ыйтмаççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем çĕнĕ, 1945 çула савăнăçлăн тата пулас çĕнтерĕве шанса тăрса кĕтсе илчĕç. Гитлерла Германие кирĕç пыракан вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлеме пирĕн тылри работниксем тата тимлĕхрех ĕçлени кирлĕ. 1945 çул—чăваш халăхĕшĕн палăрнă çул: кăçал пирĕн республика хăйĕн автономийĕ 25 çул тултарнине уявлать.

Çак уява пирĕн халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем те ĕçре çитĕнӳ тунипе кĕтсе илмелле. Çак çулта плана тултарман пĕр предприяти те, цех та, артель те пулмалла мар. Юбилее тивĕçлипе кĕтсе илес тесен, çулталăкăн малтанхи кунĕсенчех мĕнпур вăя хурса, ӳссе пыракан хăвăртлăхпа, прорыв тумасăр ĕлтес пулать. Хăшпĕр предприятисем, плана çулталăк вĕçне тултарасса шанса, çулталăк пуçламăшĕнче сӳрĕк ĕçленине пĕтерес пулать.

Уйрăм предприятисенче ĕç сӳрĕкленни халех сисĕнме пуçларĕ. Шупашкарти электростанци тикĕс мар ĕçленĕ пирки кулари предприятисем электроэнерги кирлĕ чухлĕ илсе тăмаççĕ. Шупашкарти электростанци малашне те çаван пек ĕçлесен, предприятисем плана тултарса пырасси хăрушлăх умĕнче тăма пултарать.

1945 çул технологи процессне малалла çĕнетсе пымалли, ĕç тухăлăхне татах та ӳстермелли, продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли çул пулмалла.

Д. ДУБИНИН.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн заместителĕ.

Сталин юлташăн приказĕсене ответлесе

КОМСОМОЛЬСКОЕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çăран çĕнтерĕвĕсем çине тивĕçлипе ответлес тесе, МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, тракторсене юсамалли графика ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. 15 трактора тата вĕсен çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене пĕтĕмĕшпех юсаса çитернĕ, 13 трактора государство комиссийĕ йышăннă, тепĕр икĕшне çак кунсенчех йышăнаççĕ.

Тракторсене юсас ĕçе кунăй хăвăртлатма пулать. Халĕ ĕç мĕн пурĕ те подшипниксем çитменнипе тата «НАТИ» маркăлă 3 трактор валли радиаторсем çуккипе чарăнса тăрать. Çак паха пайсене МТС мастерскойĕнче тума çук вĕсене шырамалла. МТС директорĕ Алексеев юлташ калнă тăрăх, çав пайсене тунăран ик-виç эрнерен тракторсене пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтерме пулать. Тракторсене юсас ĕç çак çăлтавсемпе чарăннă пирки, трактористсем—пурĕ 150 çын—пĕр кун хушшинче 140 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ те МТС картишне кӳрсе тынă.

МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе ытти рабочисем пушă вăхăтра ĕçлесе, лашасене хупмалли вите, 30 метр тăршшĕ хӳме, 3 тăрăх лупас айĕ, пĕр амбар, МТС картишне кĕмелли хапха туса пĕтернĕ тата 5 стенăллă пӳрт туса пĕтереççĕ. Картиш тавра хӳме тытма нумай хăма кирлине шута илсе, МТС-рах хăма çурмалли çавăрка пăчĕ туна, пăчкă трактор вăйĕпе ĕçлет. МТС-ăн тракторсене юсамалли мастерской пур, анчах унта пурĕ те 7 трактор кăна вырнаçать. Мастерская тата 6 трактор вырнаçмалăх аслăлат-ма пăхнă. Унĕр пуçне МТС валли клуб, контора çурчĕсем кирлĕ. Çаксем валли кирлĕ 200 кубометр йывăç, январĕн 28-мĕшĕнче воскресник туса, МТС коллективĕ хăех касса хатĕрленĕ. Трактористсемпе трактористкăсем Сталин юлташ Хĕрлĕ Çăран çĕнтерӳллĕ чаçĕсене паракан приказсемпе хавхаланса ĕçлеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем те МТС-а чылай пулăшаççĕ. «Двигатель революции». Шмидт тата Ульянов ячĕсемпе тăракан колхозсем йывăç турттарма лашасем ярса панă.

Çуракине тухаччен МТС клубне, конторине, трактористсем пуранмалли çурта туса пĕтересситех МТС коллективĕ тата колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. АКЧЕЛЬ

Гитлерла тискер кайăк шăтăкĕнче ĭхăраса ӳкнĕ

ШВЕЦИ ХАÇАЧЕСЕН БЕРЛИНРИ КОРРЕСПОНДЕНЧĔСЕМ ПЕЛТЕРНИ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс Нюхетер» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ Германири лару-тăру çинчен çапла çырать: «Пысăк хăрушлăх сиксе тухрĕ. Темиçе миллион çын тарать. Пур çĕрте те, хĕвелтухăç енчен пуçласа хĕвеланăç чиккине çитичченех, нимĕçсен сехри хăпса тухни палăрса тăрать. Берлин хулине паника ярса илнĕ». Корреспондент пĕр нимĕç обозревателĕ калакине кăтартса парать. Çав нимĕç çапла калать: «Пирĕн çарсем вырăссене хирĕç çирĕп тăрасси тата пирĕн хĕçпĕшал—пурте тĕппипех пĕтсе ларчĕ». «Свенска Дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырать: «Юлашки 14 кун çак вăрçă вăхăтĕнче пулса иртнĕ ĕçсенчен пуринчен те чи хăрушлисем пулса тăраççĕ. Темиçе миллион нимĕç хăйсен килĕсене тăрахса тараççĕ. Пĕтĕм Германи тăрăх хĕвелтухăç районесенчен таракансен хумĕ сарăлса пырать. Чугун çулсем, шоссе çулĕсем тата ялсем хушшинчи çулсем те таракансемпе лăках туласа ларнă. Нимĕçсем çапла калаççĕ: «Пирĕн каялла чакма çĕр çук. Тĕп промышленность районĕсене пирĕнтен тӳртса илчĕç е вĕсене йăлтах ишĕлтерсе пĕтернĕ».

ГЕТЕБОРГРИ ХАÇАТСЕМ БЕРЛИНРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĕ

ГЕТЕБОРГ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунти хаçатсем Швейцарирен килекен телеграммăсене пичетлеççĕ. Вăл телеграммăсенче апат-çимĕçпе хваттер çитмен пирки Берлинра пăлханусем пуçланса кайни çинчен калана. Германин хĕвелтухăç районĕсенчен Берлина аран-аран çитнĕ беженецсем çăкăрсăрах пурăнаççĕ. Полицине Берлин халăхĕ беженецсене хуларан хăвалать. Çаван пирки те тытăçусем пулса иртеççĕ. Хулари тĕрлĕ районсенче апат-çимĕç магазинĕсене аркатса тăкнă. Полицейскисем пăшалсемпе пенки те выçă çынсене чарма пултарайман. Январĕн 28-мĕшĕнче çаван пек пĕр çапăçура 67 çынна пĕлеркĕ. Ишĕлнĕ çуртсенче кашни кунах шăпах вилнĕ беженецсене тупаççĕ.

Гитлерла учрежденисемпе архивсене Берлинран куçараççа.

«Гетеборгс-постен» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Швецин Берлинри миссийĕ швед çыннисене хăйсен çĕршывне илсе каймă тăрăшать.

БЕРЛИНРИ УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ УРАХ ВЫРАНА КУÇАРАÇÇĕ

ПАРИЖ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Германирен илнĕ хыпарсене пĕлтерет. Çав хыпарсем Берлинри учрежденисене урăх çере куçарни çинчен калаççĕ. Германи столицинчен пур тата гражданла учрежденисене çав тери хăвăрт васкаса Баварие тата Германин кăтăр районĕсене куçараççĕ. Берлинран каякан çулсем грузовиксемпе тата поездсемпе лăках тулса ларнă. Çав грузовиксемпе поездсем çине министерствăсен япалисемпе архивĕсене тиенĕ. Халăх сехри хăпса тухнă. Совет çарĕсем çав тери хăвăтлă наступлени туса пыни вăрçă пуçланнăранпа пĕрремĕш хут нимĕçсен çăварĕсене уçрĕ. Пур çĕрте те Германири халăхи йĕркене уçăнах критикăлеççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе каларăма пĕлтерӳре çапла калана: Германире союзниксен çарĕсем, Моншау хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Зиммерат тавракурăнче наступлени туса пыраканскерсем, виçĕ миля таран малалла кайнă. Кестерниха ситнĕ, Моншау хулинчен икĕ миля хĕвелтухăçнерехри Концен тата Рорен хуласене тытса илнĕ.

Мальмедирен хĕвелтухăçнерехри сектосен çарĕсем Верцфельда йышăннă хыççăн Рохерат тата Кринкель патне çитнĕ. Унта халь çапăçусем пыраççĕ.

Буллингенран хĕвелтухăçнерехре (Германи) союзниксен пехоти, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Мюранж хулине йышăннă. Çаван пекех тата Хюнинген, Хоисфельд тата Хольцхейм хулисене тытса илнĕ.

Сен-Витран кăнтăртарахра (Бельги), союзниксен çарĕсем Бельгипе Германи чикки сывăхĕнчи Штефехтхаузен хули тавракурăнче çапăçаççĕ. Унтан кăнтăртарахра Германин Вельхенхаузен хулине тытса илнĕ. Союзниксен патрульĕсем Клерво хутчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре Ур шывĕн хĕвеланăç енне çитнĕ.

Саарбрюккенпа Рейн хушшинчи районра патрульсем çапăçнă. Кольмартан çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чăçĕсем Бишвейлер тата Мюнценхейм хулисене пырса кĕнĕ. Кольмар секторĕн кăнтăр флангĕнче союзниксен çарĕсем Серн хулине хупăрласа илнĕ унка хĕссе пынă. Унтан хĕвелтухăçнерехре Виттенхейм хулине йышăнса илнĕ.

Январĕн 30-мĕшĕнче çанталăк япăх пулни союзниксен авиацийĕн ĕçне чăрмантарнă.

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен Вăтăçĕр тинĕс тавракурăнчи хĕçпăшалла вăйĕсен штабĕ пичетлесе каларăма пĕлтерӳре çапла калана тăрăх. Италири фронтсенче, малтанхи пекех, разведчиксем кăна шыраса çӳренĕ. Авиацин пысăк соединенийĕсем ташманăн По шывĕ улăхĕнчи сулĕрĕсене, завочĕсене, электростанцийĕсемпе склачĕсене хирĕç çапăçнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерĕç: Американецсен 1.150 бомбардировщикĕ ытла Хĕвеланăç Германири 6 сортировка станцине тата Квесель хулинчи танксем тăвакан завода тапăннă. Çав ĕнĕр бомбардировщиксене 700 истребитель хӳтĕлесе пынă.

Январĕн 29-мĕшĕнче каçхине Англи бомбардировщикĕсем каллех Берлина тапăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çăрĕн штабĕ пичетлесе каларăма пĕлтерӳре çапла калана: Тăвăр, Хĕвелтухăç Боснире, Власеница районĕнче, çапăçусем пыраççĕ. Югослави часĕсем ташманăн тĕреклетнĕ темиçе пунктне пĕтерсе тăнă. Çав вăхăтра вĕсем ташманăн 240 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата çар материалĕсем чылай тытса илнĕ.

Мостар секторĕнче ташманăн пысăк вăйĕсем çапăçаççĕ.

Словенире, Блед тата Крань хулисенче, югославсен подрывникĕсем нимĕçсем пурăннă виҫĕ гостиницăна сирпĕнтерсе янă. 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Есенницăра хурçа шăратакан пысăк заводăн турбинисем патне шыв ярса тăнă каналсене ишнĕ. Завод çурчĕсем шыв айне пулнă.

Сремра разведка отрячĕсем активлăн кĕрешнĕ.

ЮГОСЛАВИН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ ПЕЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăçхине Югославин информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: Югослави премьер-министрĕ Шубашич хăйĕн правительстви вырăнтан тухни çинчен Петр короле заявлени панă. Вырăнтан тухнине йышăнса, король çăвăртах Шубашича çĕнĕ правительство туса хума хушнă. Югославин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Петр король çавăнпа пĕрлех хăйĕн власне конституци ассамблейи тивĕçлĕ решени йышăнничен регент советне панă çинчен калакан декларацине çирĕппĕн ыйтмассăр, çав декларацине пĕтĕмпех килĕшнĕ.

Çĕнĕ правительствăн премьер-министрĕ, вăлах ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе çав министрĕ—Иван Шубашич пулса тăрать. Киввй правительствăра пулнă министрсем, çар министрĕ пулнă Ристич генералсăр пуçне, пурте хăйсен вырăнĕнчех юлаççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави правительстви сывăхри кунсенче Югославие тухса каять.

Çĕнĕ правительство, тенĕ пĕлтерӳре, Халăхăн Ирĕклĕх Комитечĕпе тунă килĕшӳне пурнăçа кĕртме тăрăшакан представительсенчен тăнă паллах. «Çав правительствăн тивĕçĕ,—тенĕ малалла пĕлтерӳре,—асăннă килĕшӳне пурнăçа кĕртесси пулать».

Греции лару-тăру

АНГЛИ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ГРЕЦИРЕ

ЛОНДОН, январĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх. Англи профсоюзĕсен Уолтер Ситрин ертсе пыракан делегацийĕ рабочи движенийĕн ЭАМ-а кĕрекен лидерĕсемпе—Каламириспа, Тесспа тата Стратиспа тĕл пулнă. Вĕсем Афины хулинчен 70 миля сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Левадире тĕл пулса калаçнă.

Англи тред-юнионĕсен конгресĕн делегачĕсем паян Левадирен Афины хулине тавраннă. Вĕсемпе пĕрле Афины хулине рабочи движенийĕн ЭАМ-а кĕрекен лидерĕсем, Англи делегачĕсемпе Левадире калаçнăскерсем, пырса ситнĕ. Ситрин пуçарса янине пула, ĕнер Левадирен телефонпа Греци правительствипе калаçнă. Çав калаçура вара ЭАМ лидерĕсене Афины хулине пымă ирĕк пăтранă.

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Греци регенчĕ Дамаскинос архиепископ ЭЛАС лидерĕсене Афины хулинче февралĕн 1-мĕшĕнче пулмалли мирлĕ калаçăва представительсем ярма хушнă. Дамаскинос çапла пĕлтернĕ: ЭЛАС-ăн вăрçă представительне кăна пулмалла. Вĕсем хушшинче Сантос, коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Парцалидес тата ЭАМ Центральный Комитечĕн генеральнăй секретарĕ пулмалла. ЭЛАС Центральнăй Комитечĕн членĕ Сарафис генерал. ЭЛАС çарĕсен главнокомандующийĕ, çар советникĕ пулса пыма пултарать, тенĕ.

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, ЭАМ Пластирас правительствине февралĕн 1-мĕшĕнче тăл пулма килĕшни çинчен пĕлтернĕ. ЭАМ 3 делегат уйăрнă, тесрĕ. Вĕсен шутĕнче Сантос, Партсалидес тата Циримскос, çаван пекех тата çар экспертчĕ вырăнĕнче Сарафис генерал.

ШВЕЙЦАРИ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ПУЛАШНИ ÇИНЧЕН АМЕРИКАРИ ХАÇАТСЕМПЕ РАДИО МЕН КАЛАÇÇĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС) Швейцарире экономика ыйтăвĕсемпе ятарласа калаçма Кэрри господина Америка представителĕ ӳса яни çинчен радиопа йышăнтарса паракан Серджио çапла калать: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Швейцарие экономика енчен хĕсме шут тытни—Совет Союзĕ Швейцарие фашизм сулĕпе пырать тесе вăйлăлăн тĕрĕс пулнине кăтартать. Серджио çапла калать: халăхи вăхăтра гитлеровецсем Швейцари урлă каякан çула ӳсă курса, хăйсен Италири хĕçпăшаллă вăйĕсене пулăшма пултараççĕ. çав çула витĕрсе партни союзниксене нумай пулăшнă пулĕччĕ, тет.

«ПМ» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла калать: халăхи вăхăтра Германи хăйĕн пысăк экспорчĕ çăрнă çар промышленноçне пулăшма нейтральнăй пĕр çĕршывран çеç—Швейцаririren çеç пулăшу илсе тăма пултарать. Швейцари Пĕрлешӳллĕ нацисене, гитлерла вăрçă преступникĕсене пытармăп, тесе сăмах панă пулин те, вăл хăйĕн банкĕсене Германирен укса нумай ярса тăма чармасть: çав банксенчен укса илсе, гитлеровецсем кайран Германирен тарса пынă çынсене пулăшма пултарассĕ.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Лондона çитнĕ

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). В. В. Куэнецов юлташ ертсе пыракан совет профсоюзĕсен делегацийĕ Лондона çитнĕ. Вăл пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцине килнĕ. Аэродромра делегацие Совет Союзĕн Англири поверенныйĕ Соболев юлташ тата совет посольствин сотрудникĕсем кĕтсе илнĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПОЛЬША РЕСПУБЛИКИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШАННА

Рейтер агентстви калана тăрăх, Лондона официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: «Январĕн 30-мĕшĕнче пулнă ларура Чехословаки Правительстви Польшăн Варшавăри Вăхăтлăх Правительствине йышăнса, унпа дипломатиллĕ çыхăну пуçласа ямă йышăннă.

РУМЫНИ ПРОФСОЮЗĔСЕН КОНГРЕСĔ УÇАЛНА

БУХАРЕСТ, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Румынин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 25-мĕшĕнче Румынири профсоюзсен конгресĕ уçăлнă. Конгреса уснă чухне премьер-министр Радеску генерал, вăл ертсе пыракан правительство членĕсем, Союзниксен Контроль Комиссийĕн представителĕсем, дипломатиллĕ корпус тата СССР-па Болгари профсоюзĕсен делегачĕсем пулнă.

Антонеску режимĕ вăхăтĕнче, 1940 çулта, Румынин профсоюзĕсене хупса лартнă пулнă. Антонеску власне сирпеттерсе антартнă хыççăн, иртнĕ çулхи август уйăхĕнче, вĕсем çĕнĕрен уçăлма пуçланă. Халăхи вăхăтра Румыни профсоюзĕсем миллион член ытла пĕрлештерсе тăраççĕ. Конгресс уçăличчен малтан Румынири тĕрлĕ профсоюзсен съезчĕсем пулса иртнĕ.

Румыни профсоюзĕсен конгресĕ Румынири профсоюзсен юхăмĕн тĕп задачисене палăртса хăварса, генеральнăй ĕç конфедерацине туса хумалла.

СТЕТТИНИУС ИТАЛИЕ ПЫРСА КАЙНИ

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: ĕнер Италие Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государствăсен секретарĕ Стеттиниус пырса ситнĕ. Америкăн Вăтăçĕр тинĕс тавракурăнчи çарĕсен командующийĕпе Маккерни генерала, союзниксен Вăтăçĕр тинĕс тавракурăнчи авиацийĕн командующийĕпе Эккелĕ генерала тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен Италири посолĕпе Керкпа тĕл пулса калаçнă хыççăн Стеттиниус паян Гоцкинспа пĕрле Италирен тухса кайнă.

ЛАПКА ÇИНЧИ ВАРÇА

ЛОНДОН, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лапкă океанăн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе каларăма пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 25-мĕшĕнче Хĕвеланăç Германири 6 сортировка станцине тата Квесель хулинчи танксем тăвакан завода тапăннă. Çав ĕнĕр бомбардировщиксене 700 истребитель хӳтĕлесе пынă.

К. А. Уманский вилни пирки

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Мексико хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Уманский, Уманская, Троянский, Савин-Лазарев тата Вдовин ӳчĕсене çултăрăх хыççăн вĕсен кĕлĕсене урăхла (çавăтасене)